26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АПРЕЛЬ 24 ШАМАТКУН 87(6324) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ярославль облаçĕнчи Ярославски районри Горшиха ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе калани

Хаклă юлташсем! Тăвансем.

Паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç кĕрешсе хĕллехи кампание ăнăçлăн вĕçлерĕ. Пирĕн войскăсем тăшман çарĕсене Сталинград патĕнче, Çурçĕр Кавказра, Кубань çинче, Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра вăрçă тĕлĕшпе йывăр поражениссем тӳстерчĕç. Пирĕн войскăсем Ленинград блокадине татса тухрĕç, Демянск, Ржев, Гжатск, Вязьма районĕсенче тăшманăн вучахĕсене пĕтерсе тăкрĕç. Аслă Атăлпа Лăпкă Дон каллех пĕтĕмĕшпех пирĕн шывсем пулса тăчĕç. Тăван Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕре малалла та ирĕке кăларса пырать.

Эпир çак çĕнтерӳсемпе мухтанатпăр, эпир вĕсемпе савăнатпăр. Хамăрăн çĕре тăшман кĕтĕвĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларса çитерес çутă праздник пирĕн çĕр çинче часах пуласса эпир пĕлсе, шанса тăратпăр. Фашистла ирсĕрсем темĕнле юнлă та тискер ĕçсем тусан та, тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пирĕн халăхăн темĕнле пысăк ĕçсем тата жертвăсем тӳсмелле пулсан та, — çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пĕтĕм халăх пулăшать. Хамăрăн пĕтĕм вăя эпир юнлă фашизма татăклăнах çĕмĕрсе тăкас ĕçе паратпăр.

Пирĕн колхозсенче, уйхирсенче тата фермăсенче колхозниксемпе колхозницăсем пурте ывăнма пĕлмесĕр, ирех пуçласа сĕм тĕттĕмччен, харпăрхăй вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Эпир, колхозницăсемпе колхозниксем, хамăрăн тăван çĕршывăн аслă йăлисене тата кăтартăвĕсене тытса пыратпăр. Çав йăласене пурнăçа кĕртсе, пирĕн çынсем Тăван çĕршывшăн хăрушлăх тухса тăнă вăхăтсенче хăйсен вăйне те, пурлăхне те, пурнăçне те шеллемеççĕ.

Пирĕн Горшиха колхозĕ 1942 çулта çураки тата кĕраки планĕсене иртгерсе тултарчĕ. Тĕштырă культурисем акса хăварнă 480 гектар çĕр çинчен вăйлă тырпул—кашни гектартан 15 центнер туса илчĕ. Колхозра выльăх-чĕрлĕхсен 5 ферми пур, пĕрлештернĕ выльăхсен хисепĕ пĕрмаях ӳссе пырать. Халĕ фермăра государство панă минимумран ытлашши 122 ĕне пур. Иртнĕ çулта кашни ĕнеренех 2.740 литр сĕт суса илтĕмĕр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă ăнăçусемшĕн правительство пирĕн колхоза «Знак Почета» орденне парса тата уйрăм колхозниксене те орденсем парса наградăларĕ. Эпир государствăна тырпул, аш-какай, сĕт, çăм, ялхуçалăх чĕрчаварĕсем памалли хамăрăн обязательствăсене пурне те срокра пурнăça кĕртрĕмĕр.

Краснодар крайĕнчи Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхоз чĕнсе калани çине ответлесе, эпир 1942 çулта оборона фондне тата нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозсемпе колхозниксене пулăшма 8 гектар акса хăвартăмăр. Юратса ĕçлесе тунă çĕр пысăк тухăçлă тырпул пачĕ. Çав гектарсем çинчен кĕркунне эпир 994 пăт тĕштырă пухса илсе оборона фондне патăмăр. Кунсăр пуçне, колхоз оборона фондне 15.400 литр сĕт тата 90 пăт аш-какай пачĕ. Колхозниксем танксен колоннине тума 300.000 тенкĕ укçа пачĕç.

Халĕ пирĕн колхоз çуракине тухма пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитрĕ. Хамăрăн колхозри пухура СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен» йышăннă постановление сӳтсе-явса, эпир çуракине лайăх пахалăхпа тата кĕске срокра туса ирттерме йышăнтăмăр.

Хамăрăн колхозри пухура эпир оборона фончĕ валли тата фашистла захватчиксенчен сиен курнă колхозсемпе колхозниксене пулăшма планран ирттерсе 20 гектар тĕштырă культурисем акса хăварма йышăнтăмăр. Çак 20 гектара акмалли вăрлăха эпир колхозниксен харпăрхăй запасĕнчен пухса хатĕрлетпĕр.

Сыснасен фермипче ĕçлекен колхозниксем планран ирттерсе пĕр гектар çĕрулми лартса хăварма обязательство илчĕç, унăн вăрлăхне харпăр-хăйĕн запасĕнчен уйăрса параççĕ, сĕт-çу ферминчи колхозниксем вара — 2 гектар тымар-çимĕçсем акса хăварма пулчĕç тата çак фермăсем государство планĕнчен ирттерсе 5 сысна, мăйракаллă шултăра выльăхсем 3 пуç самăртса оборона фондне пама обязательство илчĕç. Кунсăр пуçне, выльăх-чĕрлĕх фермисенчи колхозниксем нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке тухнă тата ирĕке тухакан колхозсене мăйракаллă шултăра выльăх 10 пуç тата 10 сурăх ӳстерсе пама йышăнчĕç.

Эпир мĕнпур колхозсене, колхозниксемпе колхозницăсене пирĕн примера йышăнса илме—кашни колхозрах планран ирттерсе оборона гектарĕсем, фашистла захватчиксенчен ирĕке тухнă тата ирĕке тухакан колхозсемпе колхозниксене пулăшмалли гектарсем акса хăварма; выльăх-чĕрлĕх фермисенчи колхозниксен вăйĕпе кашни ферма çумĕнчех 1—2 гектар çĕрулми тата тымар-çимĕçсем акса хăварма, оборона фончĕ валли тата фашистла захватчиксенчен сиен курнă колхозсемпе колхозниксене пулăшма выльăх-чĕрлĕх ӳстерсе самăртма чĕнетпĕр.

Эпир шанатпăр—пирĕн сăмаха Совет Союзĕн пур кĕтесĕсенче те хĕрӳллĕн кĕтсе илĕç. Эпир пĕлетпĕр—колхозниксемпе колхозницăсем эпир чĕнсе калани çине совет патриочĕсене тивĕçлĕ пек пысăк хавасလăхпа ответлĕç.

Хаклă юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем! Хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене тĕреклетер! Фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларнă хамăрăн тăвансене пулăшар! Вĕсене ура çине тăма тата хăйсен хуçалăхне, нимĕç захватчикĕсем аркатса пĕтернĕскере, тепĕр хут йĕркелесе яма пулăшар!

Фашистла захватчиксене татăклăн тата пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе такассишĕн!

Хамăрăн Тăван Совет çĕршывĕшĕн!

Пирĕн çулпуç тата учитель, пирĕн полководец Сталин юлташ ертсе пынипе çĕнĕ çитĕнӳсем патне—малалла!

Горшиха колхоз колхозникĕсем: **И. И. Абросимов, З. А. Носкова, К. С. Гаврилова, Ф. А. Щукин, Т. Ф. Соловьева, Н. С. Ермилова, К. Т. Савинов, О. И. Фирстова, Ю. А. Фирстова, А. И. Федотова, В. М. Дроздов, С. И. Груздева, А. Н. Уханова, З. К. Карпова, Е. Л. Гаврилов, О. И. Судакова, Ф. И. Кавалкина, Н. К. Хохрулина, И. Т. Трофимова, В. И. Судаков, А. К. Быкова, А. П. Нестерова, К. К. Гурьева, М. Я. Гаврилова, Х. А. Пахомова, К. А. Карпова, Ф. Ф. Фирсов, Л. Г. Сенова, Н. С. Терентьева, Н. К. Голякова, Ф. И. Плетнева, Д. В. Синицина, А. П. Кондратьева, Е. А. Малышева, Н. Д. Фирсова, Т. Г. Хохрулина, А. В. Киселева, М. Е. Быкова, В. К. Лагузова, В. М. Плетнева, М. И. Скорнякова, Н. Е. Смирнова, О. К. Федотова, Н. А. Чикалева, А. И. Чикалева, С. Н. Максимова, М. А. Лукьянова, Ю. Ф. Лукьянова, К. И. Фомина, А. И. Носова, В. Л. Чикалева, С. И. Малахова, З. Д. Баранова, Н. И. Абросимова, А. К. Баранова, А. Ф. Носкова, А. Е. Фирстова, М. И. Рокина, А. Е. Поваренкова, А. Л. Костерина, К. Ф. Абросимова, А. С. Блохина** тата ыттисем те—пĕтĕмпе 270 çын алă пуснă.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçул транспорчĕн работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Çулйĕр Халăх **Комиссариачĕн** куçса çӳрекен **Хĕрлĕ ялавне Улатăрти** паровозсем **юсакан заводра** (начальникĕ Крупский, **партбюро** секретарĕ Шерстюк, **завком председателĕ** Демидов юлташсем) **хăварма** тата завода иккĕмĕш **преми пама** йышăннă.

Трактористсемпе трактористкăсем! Çураки вăхăтĕнче тракторсене кунĕн-çĕрĕн, пĕр кăлтăксăр ĕçлеттерĕр!

Çурхи кунăн кашни сехечĕ шутра

КАЛИНИНО. Пирĕн «Знамя труда» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем çуракине кĕске срокра тата лайăх туса ирттерессишĕн фронтри пек ĕçлеççĕ. Çурхи кунăн кашни сехечĕ хаклă. Колхозниксемпе колхозницăсем суха тума, акма хире ирхине кăвак çутăллах тухаççĕ.

Ирхине 8 сехет тĕлне колхозăн столовăйĕнче ирхи апат пиçсе çитет. Ăна бригадăсем патне уя илсе тухаççĕ.

Ирхи апат 20—30 минута хушши çеç пырать. Сухаçăсем, акакансем ĕçе хăвăртрах тума васкаççĕ. Чарăнса тăни, ĕç вăхăтĕнче сăмах ярса тăрас йĕрке пирĕн колхозниксен пачах çук.

Çапла кашни колхозник тимлĕн ĕçленине пула эпир апрелĕн 21-мĕшĕ тĕлне çурхи тырăсене 98 гектар акрăмăр. Ака пахалăхĕ аван. Агротехника кăтартăвĕсене тĕплĕн пурнăçласа пыратпăр. Ĕç çакăн пекех йĕркеллĕ пулса пырсан, эпир тĕштырăсене тепĕр икĕ кунтан акса пĕтеретпĕр. Паян Осипов юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада тĕштырăсене акмалли хăйне панă плана пурнăçларĕ. Халĕ бригада пăрса-ясмăк йышши тата техникăллă культурăсем акать.

Бригадăри сухаçăсем Е. Никифоров, И. Семенов колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем куллене талăкри нормăран иккшер хут ытларах сухалаççĕ. Хăйсем ĕçлекен лашасене те лайăх пăхаççĕ. Вăхăтра тăварса çитерсе пынипе лашасем вăйлăн ĕçлеççĕ.

М. Федоров.
«Знамя труда» колхоз председателĕ.

Çамрăксем спектакль лартса панă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Уйпуçĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем, колхозниксене çураки вăхăтĕнче культурăллă канма май парас тесе, Ф. П. Павловăн «Судра» пьесине лартса пачĕç. Çак пьесăна вĕсем Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та лартса панă.

Ю. Осиповский.

Тракторсем тикĕс ĕçлеççĕ

ЕЛЧĔК, апрелĕн 23-мĕшĕ. **(Телефонпа).** МТС-ăн пур трактор бригадисем те ĕçе тытăнчĕç. Вăйлă тырпул туса илес задачăна вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пурнăçлассине тĕп вырăна хурса, трактористсемпе трактористкăсем çураки ĕçĕсене хĕрӳллĕн туса пыраççĕ. Паянхи куна тракторсемпе пурĕ 620 гектар сухаланă.

Хĕлле тракторсемпе ялхуçалăх машинисене çирĕп юсассишĕн тимлĕн тăрăшни питех те майлă пулчĕ. Тракторсем халь акара тикĕс ĕçлеççĕ. Çĕр чĕрĕрех пулсан та чарăнса тăни, тракторсем çĕмĕрĕлни пачах пулмарĕ-ха.

Республикăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пирĕн МТС илни кăçал МТС работникĕсене тата тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене кăçал та эпир чыслăн пурнăçлăпăр.

Георгий Струнков юлташ ертсе пыракан 10-мĕш номерлĕ трактор бригади паянхи куна 80 гектар сухаланă. Ĕçĕн пахалăхĕ лайăх. Трактористсем хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Старши тракторист Илья Лукиянов юлташ «СТЗ» тракторпа сменăра 5,20 гектар сухалать. Унпа пĕрле ĕçлекен çамрăк трактористка та хăйĕн сменинче 4,80—5 гектар сухаласа пырать. (Норма тăрăх сменăра «СТЗ» тракторпа 4,5 гектар сухаламалла).

Çуракине лайăх тата хăвăрт туса ирттерессишĕн пыракан ăмăртура 11-мĕш бригада та юлса пымасть. Ку бригадăри трактористсем паянхи куна 70 гектар сухаланă. Бригадир А. Макинин тракторсен ĕçне лайăх йĕркелесе пырать. Трактористсем малтанхи кунах хăйсен нормисене ирттерсе тултарма пуçларĕç. Иртнĕ çулта кĕрхи çĕртме тунă чухне çеç тракторпа ĕçлеме пуçланă трактористка Ольга Кротова кăçал çуракинче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. «СТЗ» тракторпа вăл хăйĕн сменинче тăтăшах 4,9—5 гектар сухалать.

Коммунистсемпе комсомолецсем ĕçре малта пыракансем, пример кăтартса ĕçлекенсем пулмалла. Çак чыса парти членĕн кандидачĕ Мария Казакова çӳлте тытса ĕçлет. Хăйĕн тракторĕпе вăл кулленех 5,47 гектар сухаланă, ĕçре ыттисене паха пример кăтартса пырать.

Тракторсене вăхăтра техника енчен пăхса тăрассине пурнăçлама, тракторсен ĕçĕнче кăлтăксем пулсан вĕсене хăвăрт пĕтерме уйхире автомашина çинче организациленĕ куçса çӳрекен мастерской тухрĕ, унпа пĕрле механиксем те трактор бригадисем ĕçлекен участоксене тухрĕç. Куçса çӳрекен мастерскоя Куракин юлташ ертсе пырать.

П. ЯШИН,
МТС директорĕ.

Ака тума тухрăмăр

ИШЛЕЙ. Чаганар ялсоветĕнчи колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтри иккĕмĕш çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕç. Вăйлă тырпул ӳстерсе тăван çĕршыва, тăван Хĕрлĕ Çара нумайрах тырă, пахча-çимĕç туса памалла, ылханлă тăшмана çапса çĕмĕрме вăйлăн пулăшмалла, — çакăн пек тĕллевпе ĕçлеççĕ халь пирĕн колхозсем.

«Верный путь» колхозра ĕç пахалăхне тĕрĕслесе тăракан комисси тунă. Апрелĕн 16-мĕшĕнче бригадăсем суха тума тухрĕç, маларах типнĕ участоксем çине тырă йĕркеллĕн акса хăварчĕç.

Халĕ ялсоветĕнчи ытти колхозсем те çуракине тухрĕç. Колхозниксем çураки вăхăтĕнчи кашни кунпа туллин усă курса, тимлĕн ĕçлеççĕ.

К. Смирнова,
Чаганар ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Кок-сагыз акассине кая хăвараççĕ

КАНАШ, апрелĕн 23-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Районри 22 колхоз маларах типнĕ участоксенче çураки ĕçĕсене тума пуçланă. Апрелĕн 22-мĕшĕ тĕлне районра 319 гектар сухаланă, 171 гектар çине тĕштырăсем акнă тата 1949 гектар çинчи кĕрхи тырăсене удобренисем панă.

Анчах кок-сагыз акма районра пĕр колхоз та тытăнман-ха. Чылай колхозсем кок-сагыз вăрлăхне те кирлĕ таран хатĕрлесе хуман.

Районри колхозсен кăçал çуркунне çĕршер гектар çине кок-сагыз акса хăвармалла. Анчах та кок-сагыза çуркунне ир акма кирлине кунта шута илмеççĕ. Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ И. Кузьмин юлташ та районра кок-сагыз акас ĕç япăх пынипе килĕшсе ларать. Колхозсенче вăрлăхсем çитмеççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн кăçал çуркунне 10 гектар çине кок-сагыз акмалла. Халĕ нимĕн чухлĕ те акман-ха. Çавăн чухлĕ акма кунта вăрлăх та çитмест. Колхоз председателĕ Степанов юлташ оборонăллă культурăна вăхăтра акса, пысăк тухăçлăхпа туса илессишĕн кирлĕ пек тăрăшмасть.

Ф. Малышкин.

Комсомолецсем çуранинче тухăçлăн ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Сталин ячĕпе тăракан колхоз уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырать. Колхозниксемпе комсомолецсем ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ.

Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхозри комсомолецсем те политикăллă-массăллă ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыраççĕ. Вĕсем хĕрӳллĕ сăмахпа, хăйсем тухăçлă ĕçленипе çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерме колхозниксене хавхалантарса пыраççĕ. Комсомолец Михаил Таланцев ĕç нормине 120 процент тултарать. Комсомолец Юдин стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлет.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 22-мĕшĕнче фронтсенче паллă ушăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 22-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтернĕ, чугунçул составне аркатнă, тăшман артиллерийĕн 6 батарейине пусарнă.

* * *

Кубань çинче пĕр соединенин чаçĕсем тăшманăн темиçе хаяр атакине сире-сире пăрахнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем ятсăр пĕр высотана оборонăлакан пирĕн подразделенисене атакăланă. Хаярран çапăçнă хыççăн, 300 салтакпа офицер вилсе пĕтсен, нимĕçсен хăйсен малтанхи рубежĕсем патне чакмалла пулнă. Пирĕн авиаци тăшманăн боевой ретĕсемпе çар объекчĕсем çине вăйлăн бомбăсем пăрахнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ тата разведка туса пынă. Артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе, нимĕç пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине тата миномет батарейине пусарнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн подразделени тăшман тăнă вырăна пырса кĕрсе 2 дзота сирпĕнтернĕ тата нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра артиллерирен персе, тăшманăн артиллери батарейине пусарнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн разведчиксен групписи тăшман хушшине кĕрсе кайнă. Совет боецĕсем темиçе вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, унтан темиçе çынна тыткăна илсе хăйсен чаçне чиперех таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ ĕнер тăшман порчĕсенчен пĕрне тапаннă. Портри сооруженисене чылай сиенленĕ, сторожевой карапа тата десант антармалли 3 суднăна пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ апрелĕн 13-мĕшĕнче ирхине нимĕçсен темиçе гарнизонне пĕр вăхăтрах пырса тапаннă. Хаяр çапăçусенче тăшман гарнизонĕсене аркатса тăкнă. 200 ытла гитлеровеца пĕтернĕ. Партизансем 120 винтовка, 3 миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Чапаев ячĕпе хисепленекен отряд партизанĕсен группи боеприпассем тиенĕ нимĕç эшелонне сирпĕнтернĕ. Паровоз тата 8 вагона аркатнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Донбасри пысăк мар Свердловск хулинче юнлă тискер ĕçсем тунă. Хулана нимĕç захватчикĕсенчен татсанă хыççăн 14—17-мĕш номерлĕ шахта шурфĕнчен нимĕç бандичĕсем персе пăрахнă совет гражданĕсен 560 виллине туртса кăларнă. Вĕлернисем хушшинче «Червона Зирка» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕ Дмитрий Звягинцев, 14—17-мĕш шахта мастерĕ Павел Аносов, магазин заведующийĕ Василий Ковалев, шофер Яков Солянко, культура дворецĕн заведующийĕ Григорий Романченко, вăтам шулĕн 9-мĕш класĕнче вĕренекен Надежда Свитарева, Украина чĕлхине вĕрентекен учитель Михаил Сокирка, Волков ячĕпе хисепленекен шахта рабочийĕ Иван Овсянников тата ыттисем те пур. Куйбышев площадĕнчи гестапо çуртĕнче юнпа çырнă çырусем тупнă. Пĕр стена çине 45 хушамат çырса хунă, вĕсен айне çапла çырнă: «Пирĕн ӳтсене варта шырăр». Вĕлерес умĕн нимĕçсем арестленисене çав тери тискеррĕн асаплантарнă. Хĕрлĕ Çар пырса çапнипе каялла чакакан нимĕç бандичĕсем хулари общество çурчĕсене пурне те тата шахтерсен 170 килне çунтарса янă. Çак çуртсем пурте вăрçă ĕçĕнче нимĕнле вырăн та йышăнса тăман. Гитлеровецсем вĕсене хула халăхне хур тăвас шутпа анчах çунтарса янă.

Апрелĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Кубань çинче хаяр çапăçусем пынă. Пĕр чаçăн боецĕсем тăшманăн виçĕ атакине сирсе янă, нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшман пехотăн 2 батальонне наступление янă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене сывăха янă та вĕсем çине минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен вăйлăн пеме тытăннă. Çапăçу хирĕнче хăйсен 200 ытла виллине тата хĕçпăшалсем нумай пăрахса хăварса, нимĕçсем ним йĕркесĕр каялла чакнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче совет артиллерийĕ, сасартăк вăйлăн персе, нимĕçсен 5 дзочĕпе блиндажне аркатнă. Пĕр подразделенин снайперĕсем 67 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Снайперсем Петраковский тата Шестаков юлташсем 10 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Чугуевран çурçĕртерехре противник, минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе хӳтĕленсе, Çурçĕр Донецăн сулахай енне каçма хăтланнă. Пирĕн артиллери нимĕçсене сапаласа янă, вĕсем вара, шыв хĕрринче хăйсен темиçе вуншар виллине пăрахса хăварса, каялла чакнă. Тепĕр участокра пĕр чаçăн артиллерисчĕсем нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре противникпа хире-хирĕç перкелешсе тăнă. Совет артиллерийĕ нимĕçсен 9 дзочĕпе блиндажне аркатса тăкнă, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă. Тăшманăн разведка тăвакан отрячĕ Шапка юлташ командир пулса тăракан отделенин позицийĕсене атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене çывăхах янă та вĕсем çине харăссăн пеме пуçланă, 15 нимĕç салтакне пĕтерсе тăкнă. Ыттисем тарнă.

Совет зенитчикĕсем нимĕç самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ апрелĕн 15-мĕшĕнче халăх пурăнакан пĕр пунктри нимĕç гарнизонне атакăланă. Совет патриочĕсем тăшманпа хаярран çапăçса, 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Ленинград облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕн темиçе атакине сирсе янă. Партизансем противника халран янă та контратака туса ăна каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилĕ таран выртса юлнă. Партизансем 3 пулемет, винтовкăсем нумай тата 11.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен бомбардировка тăвакан пĕрремĕш эскадрин 2-мĕш группинчен тыткăна лекнĕ обер-фельдфебель Генрих Титьен çапла каласа панă: «Брянск аэродромĕнчи 2-мĕш группăн икĕ отрядне тата Орел аэродромĕнчи 3-мĕш группăн 2 отрядне апрелĕн 11-мĕшĕнче Курск хули çине бомбăсем пăрахма задани панă. Хула патне çитеспе совет истребителĕсем пирĕн самолетсене сапаласа ячĕç. Эпĕ, нумай ытти летчиксем пекех, Курска çитеймерĕм. Самолета вырăс зенитчикĕсем персе ӳкерчĕç, эпĕ бомбăсене пăрахма та ĕлкĕреймерĕм. Нумаях пулмасть эпĕ Германире пултăм. Тотальнăй мобилизаци хĕрсех пыратчĕ. Çара çĕнĕрен темиçе пин çынна илнĕ. Çав çынсен хĕлле нимĕç войскисенче пĕтнĕ чаçсен вырăнне йышăнмалла. Анчах та чи лайăх кадровăй дивизисем тума пултарайманнине халĕ çара илнĕ граждансем тума пултарас çук ĕнтĕ. Çав ватăла пуçланă сутуçăсемпе служащисем, лакейсемпе кельнерсем, васкавлăн салтак мундирĕсене тăхăннăскерсем, Хĕвел-тухăçĕнчи йывăр вăрçăра вăрçма юрăхлă мар, вĕсене малтанхи пысăк çапăçусенчех пĕтерсе такассĕ».

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

ВЦСПС-ра, СССР Наркомземĕпе Политуправленийĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ, СССР Союзĕн Наркомземĕпе Политуправленийĕ машинно-тракторнăй станцисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти итогĕсене пăхса тухнă. Вĕсем социализмлă ăмăртура мала тухнă машинно-тракторнăй станцисене палăртнă.

Тăвай МТС-не (директорĕ Широв, политотдел начальникĕ Чернов юлташсем) иккĕмĕш премиi пама йышăннă.

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ пĕр промышленность заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС пĕр Халăх Комиссариачĕн заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завод лайăх ĕçленине уйрăмах палăртнă.

Выранти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларассишĕн

ÇĔРПУ. Упакассинчи Громов ячĕпе хисепленекен артелĕн работникĕсем Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ф. Иванова, А. Миронова, С. Андреев, И. Герасимов, Т. Никитин тата ытти юлташсем те кунсерен ĕç нормине 150—200 процент тултарса пыраççĕ.

Артель коллективĕ тăван çĕршыва фронт умĕнчи тивĕçе таранăн туйса тăрать, производство планне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн мĕнпур вăя хурать. Эпир февраль уйăхĕнчи плана 199 проц. тултартăмăр. Пирĕн ĕçе Чăваш АССР Совнаркомĕ пысăка хурса хакларĕ, февраль уйăхĕнчи ĕçшĕн пире 5.000 тенкĕ награда пачĕ.

Кун хыççăн артельри рабочисемпе служащисен ĕçлес хастарлăхĕ татах та ӳсрĕ. Пирĕн коллектив март уйăхĕнчи плана 278,5 процент, куллен кирлĕ таварсем кăлармалли плана 333 процент тултарчĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ артеле март уйăхĕнчи ĕçшĕн 4.000 тенкĕ укçа парса премилерĕ. Çак хисеп апрель уйăхĕнче татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Пирĕн коллектив апрель уйăхĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илессишĕн çине тăрса кĕрешет.

В. Егоров,

Артель правленин председателĕн заместителĕ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. ПАТТĂР ЮЛТАШ

Эпир Мирон Филипповпа иксĕмĕр вăрçă тухаччан шăпах пĕр çулталăк хушши пĕр чаçра тăтăмăр. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çапăçăва кĕрсе пĕр çулталăк нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçрăмăр. Пирĕн чаçра çурри не яхăн чăвашсемччĕ. Пирĕн земляксем хăйсене пурте дисциплинăллă тытнипе командирсенчен ырă ят илчĕç. Пире хисеплесе пирĕн чаçа—чăвашсен чаçĕ тетчĕç. Кайран мана урăх çĕре куçарчĕç те эпĕ вара Мирон Филиппова чылайранпа тĕл пулаймасăр пурăнтăм. Ансăртран халĕ тĕл пултăм та вăл мана хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ.

Вăл хăйĕн Вăтакас Татмăш ялĕнчи колхозра пурăнакан аппăшĕнчен çыру илнĕ. «Ывăлăм, эсĕ нимĕçсемпе çирĕппĕн çапăç. Нимĕçсене çĕнтерсе киле таврăн. Эпĕ хам та иртнĕ вăрçăра пулса çав тискер кайăксене хирĕç хытă çапăçнă. Анчах аманнипе тыткăна лекнĕччĕ те, эпĕ вара нимĕçсем мĕнле тискер çынсем иккенне хам куçпа курса ĕнентĕм. Ывăлăм, чĕрĕ пуçпа нимĕçсен аллине нихăçан та ан парăн. Аçта курнă, унта вĕлер нимĕçе!» — çапла çырнă Филипповăн аппăшĕ.

Филиппов юлташ çирĕп боец пулнине кура, ăна командовани кĕçĕн командир ятне панă. Вăл—пулемет расчечĕн командирĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнче Филиппов юлташ хăйĕн пулемечĕпе нимĕç «Мессершмиттне» персе ӳкернĕ. Çĕршер фашиста персе тăкнă. Çакăншăн ăна правительство наградине илме тăратнă.

— Мана çакăн пек çирĕп çапăçма атте çырăвĕ нумай пулăшрĕ. Боевой задачисене лайăх пурнăçа кĕртсе пынăшăн командовани кану çуртне кайма ячĕ,—тесе каласа парать Филиппов.

Çапла эпир чăваш ачисем—гвардеецсем хамăрăн тăван халăх ятне ӳкерместпĕр. Сире те, колхозниксемпе колхозницăсем, çураки фронтĕнче лайăх ĕçлеме ырă сунатпăр.

Гвардеец Е. Асанов.

2. ЭПĔ СТАЛИНГРАДА ХӲТĔЛЕНĔ

Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайнă чухне эпĕ ирсĕр фашистсене пуçĕпе пĕтерсе тăкичченех çапма хамăрăн земляксем умĕнче тупа тунăччĕ. Хам панă сăмаха эпĕ çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыратăп.

Эпĕ Сталинград хулине хӳтĕленĕ çĕрте çапăçрăм. Хамăн хĕçпăшалпа нимĕçсен пĕр самолетне персе антартăм, 4 танк, нимĕç миномечĕсен 3 батарейине, 6 пулемет йăвине вĕсен расчечĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкрăм. 171 гитлеровеца леш тĕнчене ăсатрăм.

Правительство манăн ĕçе пысăка хурса хакларĕ, мана Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕ. Халĕ кĕске вăхăт хушши тылра пурăннă чухне эпир ирсĕр фашистсене татах та вăйлăрах çапма вĕренетпĕр. Тепĕр хут фронта тухса каяс умĕн эпĕ хамăрăн тăван çĕршывшăн татах та хастарлăнрах çапăçма тупа тăватăп.

Гвардин кĕçĕн сержанчĕ орденоносец **А. И. Грачев.**

(Канаш районĕнчи Кармами ялĕнчен).

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

16. Хумхануллă маршрут

Тӳлек шывсем çине ав
Ялсем пăхса лараççĕ
Хăйсен çап-çутă ĕмĕтлĕ
Таса куçĕсемпе.
Улăхсенче хĕрӳллĕн
Хĕрсем утă çулаççĕ,
Шап-шурă ретĕн тăнă
Чипер акăшсем пек.

Мотор шавне илтсессĕн
Вĕçевçĕсене хирĕç
Чи ăшă саламсем пек
шур тутăрсем вĕçес.
Орлов çакна курать те
Татах калать вăл çирĕп:
— Кунта эп ĕмĕр ямăп
Ылханлă нимĕçе!

Умра тăван столица —
Чăвашăн тĕп хулийĕ,
Атăл хĕрне мăнаçлăн
Вырнаçнă Шупашкар.
Чăвашăн паттăр ывăлĕ
Вĕçет паян ун çийĕн,
Ун кăмăлĕ хумханнă,
Ун чунĕ лăпкă мар.

Кунта — тăван республикăн
Чĕрийĕ, ăсĕ-пуçĕ,
Кунта ĕçлеççĕ фронтшăн
Тин ӳснĕ заводсем.
Кунта тин çеç çĕкленнĕччĕ
Телейĕн шурăмпуçĕ,
Çавăн çинчен хавассăн
Юрлатчĕç поэтсем.

Хула паян та лăпкă,
Анчах вĕри хаярлăх
Хăватлă Атăл тăрăх
Тапать пĕр тинĕсех.
— Туятăп, — тет вĕçевçĕ,—
Шанса тăр, аслă халăх,—
Кунта эп ĕмĕрне те
Кĕртместĕп нимĕçе!

Çĕртен çынсем пăхаççĕ.
Ик çăлтăра кураççĕ.
Çав çăлтăрсем çĕн шанчăк
Кӳреççĕ вĕсене.
— Васка, тăванăм! — теççĕ,
Вĕсем ыр çул сунаççĕ,
Вĕçевçĕ эс туятăн
Вĕсен чĕрисене.

Васкатăн эс, васкатăн,
Çунаттусем сан вăйлă,
Тăват мотор хăватлăн
Анăçаллах туртать.
Анчах умра, куратăн, —
Хăю пек çутă Вылă,
Ем-ешĕл улăхра вăл
Йăлтăртатса выртать.

Çуралнă ыр кĕтесĕн
Асамлă вăйĕ пур-тăр,
Хăй еннеллех чĕнет вăл,
Йыхравĕ ун ачаш.
Ав, Омашне вăрманĕ
Сулать сип-симĕс тутăр,
Ача чухнехи тĕлĕк пек
Выртать тăван Ямаш.

Орлов чĕри татах та
Тапма пуçларĕ хăвăрт:
Мĕнле тӳсен анмасăр
Çуралнă çĕр çине!
Экипажне каларĕ:
— Туссем чухлатăр хăвăр,
Кун пек чухне эт емĕн
Чĕрийĕ мĕнлине.

Хăватлă кайăка вăл
Кăшт аяларах антарчĕ,

Унтан ял çийĕн çавăрнчĕ
Виç хут кĕрлеттерсе.
Çав хушăра çĕре вăл
Пĕчикçĕ вымпел ячĕ:
— Ку вăл Хветутăр сирĕн,
Салам ялйышăмсем.

Шăççи çĕре лексессĕн,
Кабинăран тухсассăн,
Орловăн тулса çитрĕ
Хумханакан чĕри.
Хăй тĕллĕнех пит тăрăх,
Пĕр савăннăн, хурланнăн,
Куççулĕ юхса анчĕ,
Ачалăх пек вĕри.

Йĕри-тавра вăл пăхрĕ:
— Эх, манăçми уйхирĕм!
Ытарайми Ямашăм,
Тăван ана-çаран!
Кунта пĕчĕк кĕтӳçĕ,
Пушă йăтса ир-ирĕн,
Уç сывлăм тăрăх утнă.
Телейсĕррĕн çарран.

Кунта халь океан пек
Хумсем ярать тырпулă,
Вăл ирĕклĕ те тулăх,
Ниçта çук пĕр çыран.
Самолета курсассăн:
— Ку анчĕ мĕнле улăп? —
Тесе чупма пуçларĕç
Çынсем пур тавраран.

Часах вĕсем кураççĕ,
Часах вĕсем палласçĕ:
Юмахри мар, чăн улăп —
Хветут тăра парать.
Комбинезонне хывать вăл.
Ун куçĕсем кулаççĕ.
Хĕвел çинче çут орден
Вут пек йăлтăртатать.

— Сывах-и, тăван халăх!
— Сывах-ха, паттăр ывăл!
Анчах вăл паллаймасть-ха
Пĕрне те çийĕнчех.
Ялта тăванĕ çук ун,
Кашни тăван пек çывăх.
Вăл хăй те халăх ывăлĕ
Çак аслă çĕр çинче.

Унтан Орлов сасартăк.
Сасартăк асăрхарĕ:
Инçе те мар паллана,
Ĕмĕр манми куçсем.
Асра — чечеклĕ çимĕк,
Çав çĕмĕрт куçсем мар-и
Çăл шывĕнче вылянă
Çăлтăрсем пек çиççе!?.

Ун чух Хветутăн куçĕ
Именнĕ те пытаннă.
Халь акă вăл хăюллăн
Пике патне пырать.
Анчах та леш чĕнмесĕр
Пуçне чикет вăтаннăн,
Икĕ енче халь унăн
Икĕ ача тăрать.

Хветут ик ачине те
Алла тытса хăватлăн
Çӳле, çӳле çĕклет те:
— Пĕрлех-ха,—тет,—вĕçер!
Хăй чĕринче татах та
Тупа туса калать вăл:
— Кунта эп нихăçан та
Кĕртместĕп нимĕçе!

— Аннен таса тăприйĕ,
Якур мучин ыр ячĕ,
Тăван Ямаш та ĕмĕр,
Ан курччăр мăшкăла!—
Çапла вăл тупа турĕ,
Çапла вăл сăмах пачĕ.
Ирпе ирех вĕçтерчĕ
Татах вăл фронталла.

(Малалли пулать).

Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетленме пуçланă.

Ют çĕршывсенче

ГЕРМАНИЯ ХИМИЛЛĔ ВĂРÇĂ ТУМА ХАТĔРЛЕННИ ÇИНЧЕН ТАТА АНГЛИЯ ĂНА ХИРĔÇ ТИВĔÇЛĔ МЕРĂСЕМ ЙЫШĂНАССИ ÇИНЧЕН АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, правительство çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Тĕрлĕ çĕртен илнĕ хыпарсем тăрăх, вырăс фронтĕнче Гитлер отравляющи веществосемпе усă курма хатĕрленет. Çавăнпа та Унăн Величествин правительстви премьер-министр пĕлтĕр асăрхаттарнине тепĕр хут аса илтерет. Нацистсем е унăн вассалĕсем вырăс союзникĕсене хирĕç отравляющи веществосемпе мĕнле те пулин усă курас пулсан, союзниксем Германин пĕтĕм территорийĕпех çар промышленность центрĕсене, тинĕс порчĕсене тата ытти çар объекчĕсене хирĕç вăрçăн çав меслечĕсемпе çийĕнчех усă курĕç. Çак тĕлĕшпе Англин ресурсĕсем тата çавăн пек япаласем тăвасси пĕлтĕртенпе чылай ӳсрĕç. Германи тискерлĕхĕсене хирĕç йышăнмалли сыхлануллă мерăсем çинчен Пĕрлешӳллĕ королевствăн пĕтĕм территорийĕпех тивĕçлĕ влаçсем кирлĕ кăтартусем панă ĕнтĕ».

ШВЕЦИ ХАÇАЧĔ СОВЕТ БОЕЦĔСЕН ПАТТĂРЛĂХĔ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Нюа Даглигт Аллеханда» ятлă хаçатăн корреспонденчĕ Лефгрен, Совет Союзĕпе Финлянди фронтĕнче нумаях пулмасть пулса курнăскер, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем противник çавтери çирĕп те хастарлă пулнипе «ӳпкелешни» çинчен пĕлтерет. Вĕсем каланă тăрăх, совет боецĕсемпе командирĕсем аманнă пулсан та юлашки патрон пĕтичченех, юлашки сывлăш тухиччченех çапăçаççĕ. Нимĕçсем тыткăна илнĕ пĕр политрук ăна допрос тăвакан нимĕç офицерĕсен ыйтăвĕсем çине пĕрте ответлемен. Нимĕçсем вара ăна тискеррĕн асаплантарма пуçланă. Анчах тыткăна лекнĕ политрук пĕр сасă та кăларман. Допрос вăхăтĕнче вăл хăй умĕнчи чул ту çине сапăнса вилсе кайнă.

ЯПОНИ КАБИНЕТĔНЧИ УЛШĂНУСЕМ

ТОКИО, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви Япони кабинетĕнче пулнă çак улшăнусем çинчен пĕлтерет: ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма Тани вырăнне халиччен Нанкинра Япони посолĕ пулнă Сигемицуна лартнă; шалти ĕçсен министрĕ пулма Юдзава вырăнне Андона генерал-лейтенанта лартнă. Премьер-министр Тодзио хăй çине халăха çутта кăларас министр ĕçне илнĕ. Ку вырăнта халиччен Хасида пулнă. Ямадзакине Ино вырăнне çĕрпе вăрман министрĕ пулма лартнă. Италире посол пулнă Амона информаци совечĕн председателĕ туса хунă.

КĔСКЕН

1931—1941 çулсенче Индири халăх шучĕ 338.119.154 çынтан 388.997.555 çынна çитнĕ, урăхла каласан — 15 процент ӳснĕ. Юлашки 60 çул хушшинче нихăш вунăçуллăхра та халăх шучĕ çавăн чухлĕ ӳсмен.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман Меджез-Эль-Баб районĕнче союзниксен позицийĕсене хаяррăн атакăланă. Тăшман çапăçăва 60—80 танк тата нимĕç пехотин 5 батальонĕнчен кая мар кĕртнĕ. 25 танк çухатсан тата 500 çынни тыткăна лексен, тĕнĕл держависен войскисем каялла чакнă.

Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче çавăн пекех тăшман икĕ хутчен вăйлă контратакăсем туса пăхнă. Англи войскисем артиллерирен вăйлăн персе, тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе, вăл атакăсене сире-сире пăрахнă.

Апрелĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен Бизерта патĕнче çӳрекен çăмăл карапĕсен пысăк мар отрячĕ тăшманăн торпеднăй катерĕсемпе çапăçма пуçланă. Темиçе снаряд тӳрремĕнех лекнине палăртнă:

Союзниксен авиацийĕ фронтăн пур участокĕсенче те пысăк хастарлăх палăртнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕ Энфидавилльрен темиçе километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Такрунăна йышăнса илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ СИЦИЛИПЕ НЕАПОЛЬ ÇИНЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Неаполе атакăланă. Бомбăсем пристань районĕнче тата хулара çурăлнă. Нефтехранилищесен çывăхĕнче вăйлă пушарсем тухнă.

Мальта çинчи самолетсем Сицили çине бомбăсем пăрахнă. Тĕрлĕ çар объекчĕсем çине бомбăсем тӳрремĕнех ӳкнисене паллă тунă. Транспорт колоннисемпе поездсем çинелле пулеметсенчен пенĕ.

Американецсен «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсем Палермора тăшманăн 28 карапне путарнă е сиенленĕ. Вăйлăн аркатнă пирки Палермо портне халĕ пĕчĕк карапсем анчах пырса ларма пултараççĕ.

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СЫВЛĂШРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англи çине тата Лондон районĕ çине вĕçсе пынă. Германи самолечĕсем Лондон районĕнчи икĕ тĕле бомбăсем пăрахнă. Халăх хушшинче вилнисем нумай мар.

ЛОНДОН, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем истребительсем хӳтĕлесе пынипе Абвильри чугунçул склачĕсене тапăннă.

Апрелĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Шотландин çурçĕр-хĕвелтухăç çыранĕнчи пĕр пункта вăйлăн пырса тапăннă. Жертăвсем пур. Материальнăй сиен те кӳнĕ.

Штетина, Ростока, Берлина нумаях пулмасть пырса тапăнни çинчен тĕплĕнтерех пĕлтерекен хыпарсем илнĕ. Штетин çине пĕтĕмĕшпе 600 тоннăна яхăн 150 фугаснăй бомба тата вут хыптаракан пин бомба пăрахнă. Штетинра тухнă пушарсем хуларан 160 миля тарана курăннă. Ростокра та пит вăйлă пушарсем тухнă. Берлинра пушарсем пысăк территорие ярса илнĕ, вĕсен çутти хуларан 50 мильăран курăннă.

„Отелло“ чăваш сцени çинче

Чăваш чĕлхи вăйлă та çивĕч пуласса, тимĕр касма пултарасса пирĕн Çеçпĕл Мишши хытă шаннă. Октябрь революци поэчĕн ĕмĕчĕ çитрĕ, вăл пророкла каланă сăмахсем чăна тухрĕç. Чăваш чĕлхи государствăллă чĕлхе, политикăпа экономика чĕлхи, искусствăпа илемлĕ литература чĕлхи пулса тăчĕ. Чăваш писателĕсемпе поэчĕсем çырнă кĕнекесем кашни яла, кашни шкула çитеççĕ, вĕсем çырнă произведенисем çĕнĕ пурнăç тума вĕрентекен, чĕнекен кĕнекесем пулса тăчĕç; вĕсен кĕнекисем тыла кăна мар, фронта та çитеççĕ, чăваш паттăрĕсене çĕнĕ вăй пăраççĕ.

Хытă янăрать чăваш юрри-сăвви! Нумаях пулмасть чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ фронта кайса килчĕ. Чăвашăн илемлĕ сăмахĕ, юрри-сăвви фронтри чăваш ачисене кăна мар, ытти тăван халăх ывăлĕсене те хавхалантарнă, тăшман çине татах та хаяррăнрах çĕкленме хăват панă. Çапла вара пĕтĕм çĕршывшăн пыракан кĕрешӳре чăвашăн илемлĕ сăмахĕ те снарядпа бомба пекех кирлĕ пулса тăчĕ.

Фашистсем—этемлĕхĕн мĕнпур культурине таптакан, этем ятне çĕртекен вăрă-хурахсем. Вĕсемшĕн Гетепе Гейне çеç мар, Шекспир та никам та мар. Тĕнче культурин наследникĕсем цивилизованнăй этемлĕхпе совет халăхĕ, пирĕн тăванлă та туслă халăхсем пулса тăраççĕ. Ку япалана пĕр пĕчĕк тĕслĕх çеç кăтартса пама пултарать.

Чăвашсен Государство Академи театрĕ аслă акăлчанăн—Вильям Шекспирĕн «Отелло» ятлă чаплă трагедине чăвашла кăтартса пачĕ. Ку трагеди ĕнтĕ çынсен туйăмĕсене тăваттăмĕш ĕмĕр хушши хумхантарать. Унăн илемлĕ те çулăмлă чĕлхи халĕ, ХХ-мĕш ĕмĕрте, чăваш театрĕн сцени çинче кĕрлесе карĕ. Пирĕн театр хăйĕн 25 çуллă историйĕнче кун пек пысăк япалана лартман пулнă, тен Шекспир трагедийĕсене лартасси çутă ĕмĕт çеç пулнă пулĕ. Темĕнле ăшă çил вĕрнĕ пек туйăнса карĕ, тахçан авал пурăннă çынсен хуйхи-суйхи пирĕншĕн те çывăх пулчĕ, пăхса ларакансене трагеди хăйĕн аллине çавăрса илчĕ.

Хастар çар çынни мавр Отелло илемлĕ те çамрăк венецианкăна—Дездемонăна юратать. Анчах та вĕсен таса та вĕри юратуне чиншăн та укçашăн çунакан икĕ питлĕ Яго пăсса, хирĕçтерсе ярать. Отелло кӳлешме тытăнать, тен йăнăшатăп пулĕ тесе асапланать. Çав вăхăтрах хура ĕç тăвакан Яго савăнать, хĕпĕртет. Хĕрсе кайнă Отелло айăпсăр Дездемонăна чиксе пăрахать, кайран, хăй йăнăшнине кура, хăйне хăй чиксе пăрахать, Яго та тăрă шыв çине тухать. Трагедин ăшчикĕ кĕскен çапла.

Отелло рольне чăвашсен тава тивĕçлĕ артисчĕ Игнатий Молодов, Дездемона рольне—Рона Иванова, Яго рольне Чăваш АССР халăх артисĕ Борис Алексеев выляççĕ.

Чăн артист спектакльтен спектакле вĕренсе, ӳссе пырать. Отелло ролĕнчи Молодов ку постановкăра хăй пысăк талантлă артист иккенне, ун умĕнче пысăк çул тăнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕ. Вылять тенĕ сăмах талантлă артистшăн килĕшӳсĕр сăмах; ун пек артист вылямасть, сцена çинче вăл пурăнать, пĕтĕм хăвачĕпе, пĕтĕм чун-чĕрипе пурăнать, вăл хăй сцена çинчине те мансах каять. Ун чухне вара вăл зрителе хăйĕн аллине илет. Тава тивĕçлĕ Молодов та Отелло образне çакăн пек пысăк вăйпа кăтартса пачĕ. Вăл çуратнă образ манми образ пулса юлчĕ.

Дездемона ролĕнчи Рона Иванова та хăй ӳссе пынине кăтартать. Айăпсăр асап куракан пике образне вăл пăхса ларакансем патне ăшшăн та ăнăçлăн çитерчĕ, парăнса, чунпа выляни сисĕнчĕ.

Яго ролĕ—чи йывăр роль. Яго—чее, икĕ питлĕ. Пĕринпе вăл—ырă, теприн пе—усал, анчах çав вăхăтрах вăл, хăйĕн тирĕшĕн тăрăшса, пуринпе те килĕштерсе пыма хăтланать. Отеллăпа Дездемона çине пĕр вăхăтра савăнса, хĕпĕртесе, тепĕр вăхăтра кулянса, хурланса пăхса лартăмăр пулсан, Яго çине çилленсе, хытăрах, каласан, шăл хăйраса, чăмăр чăмăрласа пăхрăмăр. Апла пулсан чăваш халăх артисчĕ Борис Алексеев Яго рольне витĕмлĕн те лайăх вылянă.

Кассио рольне—Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ Ургалкин, Эмилия рольне—актриса Тани Юн, Родриго рольне—Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ Семенов, Гробацио рольне—артист И. С. Максимов-Кошкинский т. ыт. те ăнăçлăн вылярĕç.

Премьера ăнăçлă пулни артистсенчен кăна мар режиссертан та нумай килет. Режиссер Леонид Родионов ку спектакльте хăйĕн пысăк пултарулăхне кăтартса пачĕ.

«Отеллăна» вырăсларан илнĕ тĕрлĕ куçарусем тăрăх Александр Кăлкан чăвашла куçарнă. Шекспирăн витĕмлĕ те илемлĕ чĕлхи чăвашла та витĕмлĕн те илемлĕн илтĕнчĕ.

Анчах çакна та каласа хăварас пулать: пирĕн хăшпĕр артистсен чĕлхи литературăллă чĕлхе мар, часчасах вĕсем чăваш чĕлхине хуçкалаççĕ, пăсаççĕ. Театр культурăна ӳстерекен, саракан çурт пулсан, унăн чĕлхи те культурăллă чĕлхе пулмалла.

Инçетре вăрçă кĕрлет. Пĕтĕм халăх фронтшăн ĕçлет. Çав вăхăтрах пирĕн искусство та ӳссе, аталанса пырать. Кăна Чăвашсен Государство Академи театрĕ ытти пьесăсемпе пĕрлех Шекспирăн «Отеллине» кăтартса пани те лайăх палăртса тăрать.

Чăваш театрĕ Шекспир трагедине лартса пани—пысăк утăм, пысăк çитĕнӳ, вăл чăннипех те чăваш искусствин праçникĕ пулчĕ.

ÇТИХВАН ШАВЛЫ.

Ответлă радактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР Пиравăр Халăх Комиссариачĕн „Энерготрансучтекстилĕн“ Шупашкарти филиалĕ шоферсен курсĕ валли авто ĕçĕ çинчен вĕрентме преподавательсем хатĕрлекен курса вĕренме илет. Курсра тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ.

Вĕрентессе 4 уйăх хушши, кăнтăрла вĕрентеççĕ.

Курса вăтам шкул пĕтернисене, арçынсене те хĕрарăмсене те илеççĕ. Авто ĕçĕпе паллашнисем пулсан аван.

Курсантсене уйăхра 350 тенкĕ стипенди параççĕ, кунне икĕ хут вĕри апат çитереççĕ, общежити параççĕ.

Заявленисене майăн 10-мĕшĕччен илеççĕ, занятисем майăн 10-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Заявленисене çакăн пек документсемпе пĕрле филиал директорĕ ячĕпе ямалла: 1) вĕреннипе ĕнентерекен свидетельство; 2) автобиографи тата 3) çарапуçăн ӳкернĕ 4 фотокарточка,

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, К. Либкнехт урамĕ, 14. Телефон 6—93. Кăнмалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах, 9 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

Çăкăр комбинатне ялан ĕçлеме экспедиторсем, жестяншик тата возчиксем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Аптечная ур. 4.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1036 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.